Октябрĕн 8-мĕшĕнче - ЧР Патшалăх Канашĕн депутачĕсен суйлавĕ



### ЧР Патшалăх Канашне 8-мĕш Муркаш суйлав округĕпе депутата суйлама «Единая Россия» парти тăратнă кандидат Владислав Григорьевич ДАНИЛОВ

***Владислав Данилов Муркаш районĕнче çуралнă, çитĕннĕ, вĕреннĕ. Чĕрĕк ĕмĕр ытла Муркаш тĕп больницинче врач-хирург пулса ĕçлет. 2002 çултанпа ăна районăн тĕп врачĕ пулма шаннă. В. Данилов хăй тухтăр пулнă май кашни çыннăн сывлăхĕшĕн тăрăшать. Вăл Чăваш Ене хăватлă, пуян, вăйлă республика пулнине курасшăн. Кунта кашни çын тулли пурнăçпа пурăнма пултартăр. В. Даниловăн çакăншăн ĕçлеме кăмăлĕ те, пĕлĕвĕ те, ĕç опычĕ те çителĕклĕ. Вăл халăх шанăçне тӳрре кăларма пĕлекен, пултаракан çын.***

***Унăн девизĕ – сывлăхшăн, йĕркелĕхшĕн тата аталанушăн!***

***Хисеплĕ суйлавçăсем, хамăрăн пурнăç шайĕ лайăхлантăр, чун-чĕрере лăпкăлăх хуçалантăр тесен, эсир хăвăр сассăрсене В. Даниловшăн парасса шанатпăр.***

Материал тӳлевсĕр пичетленет.

Пресс-конференци

## Хăш партин суйлав фончĕ пуянрах?

Чăваш Республикин Тĕп суйлав комиссийĕн председателĕ Л. Линик пресс-конференцире суйлав кампанийĕн финанс ыйтăвĕсене çутатса пачĕ.

Укçа-тенкĕсĕр нимĕнле суйлав та ирттереймĕн. Чăваш Республикин “Чăваш Республикин Патшалăх Канашĕн депутачĕсен суйлавĕ çинчен” саккунĕ суйлав фончĕсем йĕркелемелли финанспа пулăшу çăл куçĕсене, вĕсен чи пысăк шайне палăртать. Çавăн пекех тăкакланакан укçа-тенкĕ шайĕн виçи те пур.

Саккунпа килĕшӳллĕн халĕ Патшалăх Канашĕн тăваттăмĕш суйлаври суйлавне хутшăнакан суйлав пĕрлешĕвĕсен суйлав фончĕсем çакăн пек çăл куçсенчен йĕркеленеççĕ:

– **политика партийĕн, суйлав пĕрлешĕвĕн** хăйĕн укçи-тенки – 9 миллион тенкĕ (пĕтĕм тăкаксен чи пысăк шайĕн 30 проценчĕ);

– **граждансем хăйсен ирĕкĕпе пулăшни –** 21 пин тенкĕ (0,7 процент);

– **юридици сăпачĕсем хăйсен ирĕкĕпе пулăшни** – 1 миллион та 50 пин тенкĕ (3,5 процент);

Çапла майпа саккун суйлав ирттерме суйлав пĕрлешĕвĕсене пурĕ 30 миллион тенкĕпе усă курма ирĕк парать.

Авăнăн 14-мĕшĕ тĕлне пуринчен те ытларах укçа-тенкĕ **“Тăван çĕршыв” (Родина)** политика партийĕн Чăваш Енри уйрăмĕн суйлав фондне пырса кĕнĕ – 6 миллион та 500 пин тенкĕ. Çак суммăна 7 юридици сăпачĕ хывнă.

Иккĕмĕш вырăнта – **Пĕтĕм Раççейри “Пĕрлĕхлĕ Раççей” политика партийĕн Чăваш Енри уйрăмĕн суйлав фончĕ** – 6 миллион та 116 пин тенкĕ. Вăл шутран 30 проценчĕ – партин хăйĕн укçи-тенки, 70 процентне вара 4 уйрăм çынпа 23 юридици сăпачĕ парса пулăшнă.

**“Раççей патриочĕсем” политика партийĕн Чăваш Енри уйрăмĕн суйлав фондне** хальлĕхе 1 миллион та 677 пин тенкĕ пуçтарăннă. Пĕтĕмпех – партин хăйĕн пурлăхĕ.

**Либерал-демократсен политика партийĕн регионти уйрăмĕн суйлав фондне** хальлĕхе 26 гражданинпа (35 процент) 4 юридици сăпачĕ (65 процент) 1 миллион та 400 пин те 280 тенкĕ укçа хывса пулăшнă.

Хальлĕхе пуринчен те “чухăнрахxи” **Раççей Федерацийĕнчи коммунистсен партийĕн республикăри уйрăмĕн суйлав фончĕ:** унта 306 пин те 500 тенкĕ пуçтарăннă. Вăл шутран 49 проценчĕ – парти пурлăхĕ, ыттине вара 10 гражданин хăйсен ирĕкĕпе парса пулăшнă.

Асăннă цифрăсем, паллах, малашне ӳссех пырĕç – суйлав кампанийĕн агитаци тапхăрĕ кунсерен хĕрсе пырать-çке.

Пĕр мандатлă суйлав округĕсенче кĕрешекен кандидатсем те агитаци тапхăрĕнче укçа-тенкĕ шеллемеççĕ. Вĕсем те округсенчи суйлав комиссийĕсене хăйсен суйлав фончĕсем çинчен сведенисем тăратнă. Кам “пуяннипе” “чухăнни” тĕрĕслев витĕр тухнă хыççăн часах паллă пулать.

Саккунпа килĕшӳллĕн кашни кандидатăн суйлав фончĕ мĕн чухлĕ пулнине массăллă информаци хатĕрĕсем урлă пĕлтермелле.

«АПК аталантарасси» наци проекчĕ

## Çĕр ĕçне юратсан, хăвăн çине шансан

Виталий Геннадьевич Ямангеевпа шухăшламантуман çĕртен тĕл пултăм. Сăмах çумне сăмах, калаçса кайрăмăр. Шомик ялĕнчен вăл. Ачаллах çĕр ĕçне хăнăхса ӳснĕ. Çавăнпа та çĕр ĕçне çын каласа панипе мар, хăйĕн пурнăç опычĕпе курса-туйса тăрать. Малтанхи вăхăтра вăл пĕрлешӳллĕ хуçалăхра вăй хунă. Халĕ вара хăйне хăй тĕрĕслесе пăхма шутланă, фермер хуçалăхĕ йĕркеленĕ.

– Ку шухăш манăн малтанах çуралнăччĕ,– каласа парать вăл.– Кăштах тăхтас терĕм. Иртнĕ çул вара хамăн шухăша пурнăçа кĕртрĕм.



Виталий Геннадьевич хресчен фермер хуçалăхне 2005 çулта йĕркеленĕ. «Рассвет» ятлă вăл. Унăн 34 гектар çĕр. Тĕш тырă, çĕр улми çитĕнтерет вăл. Пĕрчĕллĕ культурăсене пухса кĕртнĕ ĕнтĕ. Акă, 25 гектар çинчи урпа гектар пуçне 20 центнера яхăн тухăç панă.

Çĕр улмине кăларма тытăнман-ха. Фермер хуçалăхĕн ертӳçин шучĕпе вăл та гектартан сахалтан та 150 центнер тухмалла. Пайта пулмаллах.

– Ял хуçалăхĕ çине патшалăх юлашки вăхăтра ытларах тимлĕх уйăрма тытăнни савăнтарать,– тет фермер.– Çавăнпах ĕнтĕ агропромышленность комплексне аталантарасси приоритетлă наци проекчĕсенчен пĕри пулса тăрать. Килти хушма хуçалăха аталантарма патшалăх çăмăллатнă кредитсем парса та пулăшать. Ку çăмăллăхсемпе усă куракансем сахал мар.

Виталий Геннадьевич шухăшĕпе ӳсĕмлĕ ĕçлесе пырас пулсан çĕр ĕçне юратни, хăвăн çине шанни кирлĕ. Ун чухне мĕн шутланине вĕçне çитерме пулатех. В.Г. Ямангеев хуçалăхĕнче çĕр хатĕрлес, ял хуçалăх культурисене акса-лартса тăвас тата пухса кĕртес ĕççене пурнăçлама кирлĕ техника пур ĕнтĕ. Çĕннисемех мар пулин те, усă курма юрăхлă. «Нива» комбайн та, МТЗ-50 кустăрмаллă трактор та ĕçлеççĕ. Май пулсан вара çĕнĕреххисене туянма та шанăç пур.

Виталий Геннадьевич Ямангеева ăнăçусем сунса сывпуллашрăм. Чăннипех çĕр ĕçченĕ, нимĕн те калаймăн.

**В. ШАПОШНИКОВ.**

**Сăн ӳкерчĕкре: «Рассвет» хресчен фермер хуçалăхĕн ертӳçи В.Г. Ямангеев.**

**Автор сăн ӳкерчĕкĕ.**

Октябрĕн 8-мĕшĕнче - ЧР Патшалăх Канашĕн депутачĕсен суйлавĕ

### ЧР Патшалăх Канашне 8-мĕш Муркаш суйлав округĕпе депутата суйлама тăратнă кандидат Владимир Ильич АНИСИМОВ



***Чăваш Республикин Канашне пĕр мандатлă 8-мĕш Муркаш суйлав округĕпе коммунистсен партийĕ депутата суйлама тăратнă кандидат Владимир Ильич Анисимов 1949 çулта Элĕк районĕнчи Пĕчĕк Йăлкăш ялĕнче çуралнă. Аслă пĕлӳ илнĕ, çемьеллĕ, 5 ача ашшĕ. Район депутачĕ. 2-мĕш суйлавра Чăваш Республикин Патшалăх Канашĕн депутачĕ пулнă. Хусанти ветеринари институтне пĕтернĕскер, Молдави Республикинче ултă çул хушши ĕçленĕ. Унтан таврăнсан Элĕк районĕнчи “Шумшевашский” совхоз директорĕнче ултă çул, ял хуçалăх управлени начальникĕнче икĕ çул, КПСС райкомĕн пĕрремĕш секретарĕнче тăватă çул, районти тĕп ветеринари врачĕнче тăхăр çул, Элĕк районĕн администраци пуçлăхĕнче пилĕк çул хушши вăй хунă.***

**Шанса панă ĕççенче манăн хамăн пурнăç тĕллевĕ çапла: халăх шанăçне тӳрре кăларасси, ачасене тӳлевĕр вĕрентесси, халăх сывлăхне пăхса тăрасси, халăха тата ял хуçалăхне малалла аталанма çулсем уçса парасси. Тĕрĕслĕхпе çирĕплĕхе пăхăнса ĕçленĕ, юрассишĕн тăрăшман. Çакă нумай чух влаçри пысăк çынсене килĕшмерĕ.**

**Паянхи влаçра халăхшăн тăрăшасси курăнмасть. Хăйсен интересĕсемшĕн халăх шухăшĕсене, нушисене, йывăрлăхĕсене шута илмеççĕ. Çавна пула йĕркесĕрлĕх хуçаланать. Халăх йышĕ чаксах пырать. Влаç демографи ыйтăвĕсем çине кирлĕ пек пăхманран, ачасем çуккипе шкулсем хупăнаççĕ. Лайăх теççĕ, мухтанаççĕ, анчах ăçта лайăххи?**

**Пĕрлешӳллĕ хуçалăхсене панкрута ярса тĕлли-паллисĕр аркатаççĕ. Хуçалăхсемпе шкулсем хупăнсан ял пĕтесси куçкĕрет, мĕншĕн тесен ял çынни ĕççĕр тăрса юлать. Ĕç укçи çукран ачапăчана ура çине тăратма та май пулмĕ. Сиплевĕ, вĕрентĕвĕ укçалла вĕт-ха?**

**Çавăнпа та çынсем суйлава хутшăнма пăрахрĕç. Анчах та çӳлте йышăнакан саккунсене эпир шанса сасă панă депутатсемех йышăнаççĕ. Йĕрки çапла.**

**Хисеплĕ суйлавçăсем, эсир тивĕçлĕ, таса туйăмлă, ултавпа çыхăнман, сирĕн интерессене мала хуракан, саккунсене ăнланакан тата сирĕн шухăшсене çав çӳллĕ шайра каласа ăнлантарма пултаракан çынсене çул уçса панинчен сирĕн пурнăç епле пуласси килет. Ахаль çын терт-нушине хăйсене кирлĕ чух çеç “ăнланса” пăхакансене шанма кирлĕ мар.**

**Манăн паянхи кун тĕллевĕ – арканса-саланса пĕтессине чарса лартасси. Вуншар çул пухнă ырлă-пурлăх район çыннисемшĕн ĕçлетĕр. Муркаш районĕ республика шайĕнче пур енĕпе те тивĕçлĕ вырăн йышăнтăр.**

**Хисеплĕ суйлавçăсем, пурте суйлава хутшăнса хальхи аркатуллă пурнăçа кăмăлламастăр пулсан, коммунистсемшĕн сасăлăр!**

**Сире хисеплесе, сирĕн кандидат – Владимир Ильич Анисимов.**

Материала пичетлеме кандидат фондĕнчен тӳленĕ.

Курав

## Малти вырăнсене йышăнчĕç

Сентябрĕн 9-мĕшĕнче “Чувашское” акционерсен уçă обществинче ăратлă выльăхсен куравĕ иртрĕ. Пирĕн районти ăратлăх енĕпе ĕçлекен 6 хуçалăх та хутшăнчĕ унта. “Свобода” курава ăратлă пушмак пăрусемпе ĕнесем тăратрĕ.

“Орининори” ăратлă пушмак пăрусем те, “Ударникри” пушмак пăрусемпе ĕне, Суворов яч. хис. хуçалăхри ăратлă сыснасем те куракансемшĕн кăсăклă пулчĕç. Çавăн пекех “Геройăн” ăратлă сыснисемпе сурăхĕсем, “Моргаушская” чăх-чĕп фабрикинчи чăхсем те выставкăна пырса куракансене ăмсантарчĕç.

Палăртмалла, çак курава Е. Андреев яч. хис., “Чемеево” хуçалăхсем сыснасемпе, “Передовик” кроликсемпе, “Лидер” АФ чикĕллĕ явапăхлă обществăн сурăхсемпе хутшăнмаллаччĕ. Шел пулин те, вĕсем республика умĕнче хăйсен ĕçне кăтартмарĕç, выставкăна выльăхсене тăратмарĕç.

Курава хутшăнакансем вара, ав, парнеллĕ вырăнсене çĕнсе илчĕç. Тĕслĕхрен “Оринино” хуçлăхри 10-12 уйăхри пушмак пăру III, 12-15 уйăхри пăру II вырăна тухрĕç. “Свободăри” 12-15 уйăхри пĕрре пăрулана ĕне II вырăна тивĕçрĕ, тесе хак пачĕ жюри. Асăннă хуçалăхри “Алпине” сысна аçипе “Волшебница” сысна ами иккĕшĕ те медальсене тивĕçрĕç. “Герой” такипе сурăхĕсем те пушшăн таврăнмарĕç хуçалăха. Ертӳçĕпе специалистсене вĕсем çĕнсе илнĕ II вырăнпа савăнтарчĕç.

Курава хутшăннă “Моргаушская” чăх-чĕп фабрикин чăххисем те парнеллĕ вырăн хуçисем пулса тăчĕç.

Суворов яч. хис., “Ударник” хуçалăхсен выльăхĕсем те парнесемпе таврăнчĕç куравран.

**Л. ПАВЛОВА.**